[illegible]-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942
НОЯБРЬ
22
ВЫРСАРНИКУН
272 (6207) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Халӑха йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентесси—оборонӑллӑ пысӑк ӗҫ

Оборона Халӑх Комиссарӗ Сталин юлташ Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци XXV ҫул тултарнӑ ятпа кӑларнӑ приказра Хӗрлӗ Ҫар умне ҫакӑн пек задача лартрӗ: тӑшмана аркатса пӑрахмаллах пырса ҫапма ҫине тӑрса тимлӗн хатӗрленмелле. Ҫак оборонӑллӑ питех те пысӑк задачӑна пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе пирӗн Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫеҫ мар, Совет Союзӗнчи пӗтӗм ӗҫҫыннисен мӗнпур вӑя хурса ӗҫлемелле. Эпир Хӗрлӗ Ҫар валли резервсем хатӗрлес тӗлӗшпе мӗн чухлӗ тимлӗнрех ӗҫлетпӗр, гитлеровецсен ҫарне пырса ҫапасси ҫавӑн чухлӗ вӑйланать.

«Кӑҫалхи ҫулӑн пуҫламӗшӗнче, хӗл вӑхӑтӗнче, Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫсен фашистла войскисене чылаях вӑйлӑн пыра-пыра ҫапрӗ. Нимӗҫсем Мускав ҫине тапӑннине сирсе ярса, пуҫарулӑха вӑл хӑйӗн аллине илчӗ те наступлени тума тытӑнчӗ, нимӗҫ войскисене Хӗвеланӑҫнелле хӑваласа кайрӗ, пирӗн ҫӗршывӑн чылай облаҫӗсене нимӗҫсен чуралӑхӗнчен ирӗке кӑларчӗ» (**Сталин**).

Ҫак ҫапӑҫусенче пирӗн хӑюллӑ йӗлтӗрҫӗ-боецсем геройла ӗҫсем турӗҫ. Вӗсем ҫил-тӑманлӑ, шартлама сивӗ кунсенче те гитлеровецсене канӑҫ памарӗҫ: йӗлтӗрҫӗсен отрячӗсем фашистла дивизисен ҫулӗсене пӳле-пӳле лартрӗҫ, вӗсем пирӗн паттӑр пехотинецсемпе, артиллеристсемпе тата танкистсемпе пӗрле тӑшмана Хӗвеланӑҫнелле хӳтерсе кайрӗҫ, совет ялӗсемпе хулисене ирӗке кӑларчӗҫ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи иккӗмӗш хӗл ҫитрӗ. Фронта тӗреклетес тесен, йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентес ӗҫе кӑҫал татах та вӑйлатмалла. Ҫакна шута илсе, ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн бюровӗ йӗлтӗрҫӗсем хатӗрлес тӗлӗшпе ятарласа постановлени йышӑнчӗ. ВКП(б) райкомӗсемпе горкомӗсене ҫитес хӗлре халӑха йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентес тӗлӗшпе тумалли мероприятисене палӑртма, ҫав мероприятисене мӗнле пурнӑҫласа пынине тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑма хушрӗ. ЧАССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Физкультурӑпа Спорт ӗҫӗсен республикӑри комитетне, ВЛКСМ Обкомне, профсоюзсен Обкомӗсене тата спорт обществисене хӗле кӗриччен йӗлтӗрсен базисене, спорт инвентарӗсене тата йӗлтӗр спорчӗн обществӑллӑ инструкторӗсене хатӗрлеме, йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗренмелли командӑсемпе отрядсем организацилеме хушрӗ.

Ҫак постановление йышӑннӑранпа нумай вӑхӑт иртрӗ. Анчах ӑна пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе Шупашкар хулинче тата Тӑвай, Етӗрне, Сӗнтӗрвӑрри, Елчӗк районӗсенче ҫеҫ хӑшпӗр ӗҫсене тунӑ-ха.

«Динамо» спорт обществи 2.000 мӑшӑр йӗлтӗр туяннӑ, Шупашкар хулинче йӗлтӗрҫӗсем хатӗрлеме 50 команда, Шупашкар районӗнче—108 команда, Тӑвай районӗнче 15 команда организациленӗ. Тӑвай, Етӗрне, Пӑрачкав тата Шупашкар районӗсенче йӗлтӗр спорчӗн обществӑллӑ инструкторӗсене хатӗрлеме тытӑннӑ. Тӑвай районӗнче, сӑмахран, паянхи кун тӗлне 44 инструктор хатӗрленӗ. Шупашкар хулинчи военкоматра тата «Спартак» спорт обществинче йӗлтӗр базисене йӗркелесе ҫитернӗ, вӗсенче ярӑнма юрӑхлӑ йӗлтӗрсем пурӗ 600 ытла шутланаҫҫӗ.

Анчах Канашпа Улатӑр хулисенче, Йӗпреҫ, Октябрьски, Шӑхасан, Сӗнтӗр тата Куславкка районӗсенче халӑха йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентме хатӗрленес тӗлӗшпе нимӗнех те туман-ха. Ҫӳлте асӑннӑ районсем йӗлтӗр спорчӗн обществӑллӑ инструкторӗсене хатӗрлеме тытӑнман, йӗлтӗр базисене йӗркене кӗртмен. Сӗнтӗр районӗнче, сӑмахран, мӗн чухлӗ йӗлтӗр пуррине те шута илмен, йӗлтӗр скреплени йӗсемпе пататкисене хатӗрлес ӗҫе пуҫӑнман. Октябрьски райсовет исполкомӗн ҫур ҫулталӑк хушши ӗнтӗ физкультурӑпа спорт ӗҫӗн инструкторӗ ҫук. Халӑха ҫар ӗҫне вӗрентес, оборона значокӗсен нормисене партарас ӗҫе Йӗпреҫ, Комсомольски тата Куславкка районӗсенче питех те начар туса пыраҫҫӗ, вӗсенче кӑҫал пӗр ҫын та ГТО тата БГТО значокӗн нормисене паман.

Хӗл ҫитрӗ, йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентес ӗҫе халех тимлӗн тытӑнмалла.

Йӗлтӗрҫӗшӗн кӗрхи вӑхӑт—тренировкӑсем тумалли хаклӑ вӑхӑт пулса тӑрать. Йӗлтӗр ҫинче ҫӳреме тата йӗлтӗр ҫинче ҫапӑҫма вӗренес тесен, чӑтӑмлӑ та тӳсӗмлӗ, патвар шӑмшаклӑ пулмалла, юр ҫӑвиччӗнех вӗренме тытӑнмалла, тренировкӑллӑ занятисем ирттермелле, ҫырма-ҫатраллӑ вырӑнсенче ҫуран походсем тумалла, оборона значокӗсен нормисене памалла тата ытти те.

Анчах чылай районсенче, Канашпа Улатӑр хулисенче кун ҫинчен маннӑ пулмалла. ЧАССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Физкультурӑпа Спорт ӗҫӗсен Комитечӗпе ВЛКСМ Обкомӗ, профсоюзсен Обкомӗсем вырӑнсенче халӑха йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентмелли командӑсемпе отрядсем организацилес, йӗлтӗр базисем хатӗрлес ӗҫе ҫителӗксӗр ертсе пыраҫҫӗ.

Ҫӗршыв умӗнче пысӑк хӑрушлӑх тӑрать. Ирсӗр тӑшман ҫаплипех Кавказ патне тапаҫланма, Сталинград районӗнче атакӑсем тума чарӑнмасть. Ҫавӑнпа пирӗн пӗтӗм ҫӗршывӑн кашни кун, кашни сехетре фронт ҫинчен шутламалла, фронта пулӑшас тӗлӗшпе ырми-канми ӗҫлемелле. Сывлӑх тӗлӗшӗнчен йӗлтӗр ҫине тӑма пултаракан кашни комсомолецпа союзра тӑман ҫамрӑкӑн, кашни рабочипе служащи, колхозникпе колхозницӑн, вӗренекенпе шкул ачин йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗренмелле.

Йӗлтӗрҫӗсене хатӗрлесси—государствӑллӑ питех те пысӑк ӗҫ. ВКП(б) райкомӗсемпе горкомӗсен, ВЛКСМ райкомӗсемпе горкомӗсен ҫитменлӗхӗсене халех пӗтерсе, ку ӗҫре татӑклӑ улшӑну тумалла. Халӗ халӑха йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентес тӗлӗшпе решенисем йышӑнни мар, ку ӗҫе конкретлӑн тума тытӑнни кирлӗ.

ВЛКСМ Обкомӗн, Физкультурӑпа Спорт ӗҫӗсен республикӑри Комитечӗн, профсоюзсен Обкомӗсен тата спорт обществисен халӑха йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентес ӗҫе куллен, оперативно туса пымалла.

Укҫа-тенкӗ пухас ӗҫре хӑшпӗр районсем юлса пынине пӗтермелле

Ҫак ҫулхи тӑваттӑмӗш кварталта халӑхран укҫа-тенкӗ пухмалли плана республика ноябрӗн 16-мӗшӗ тӗлне 52,5 процент тултарнӑ. Республикӑри финанс органӗсем плана ытларах тултарма майсем пулнӑ. Анчах чылай хуласемпе районсенчи финанс органӗсем ҫав майсемпе кирлӗ пек усӑ курмарӗҫ тата ирӗклӗ тӳллевсене пухас тӗлӗшпе уйрӑмах начар ӗҫлерӗҫ. Ҫавна пула тата хӑшпӗр районсем укҫа-тенкӗ пухас ӗҫе ҫӳрӗклетнине пула тӑваттӑмӗш кварталти малтанхи итогсем ҫителӗксӗртерех пулчӗҫ.

Тӑваттӑмӗш кварталта уйрӑмах Первомайски, Чкаловски тата Калинински районсем юлса пыраҫҫӗ. Ҫак районсенчи финанс отделӗсен заведующийӗсем налог инспекторӗсемпе агенчӗсен ӗҫне япӑх ертсе пыраҫҫӗ. Финанс работникӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвне те тивӗҫлипе организацилемен. Ҫавӑнпа кунта укҫа-тенкӗ пухас ӗҫе тӑтӑшах туса пыни ҫук, плана пур тӳллевсем тӑрӑх та тултарса пырассишӗн кӗрешмеҫҫӗ.

Ялхуҫалӑх налогне пухас плана республика ноябрӗн 16-мӗшӗ тӗлне 69 проц. тултарнӑ, анчах Чкаловски района илсен вара плана ҫурри чухлӗ те тултарайман. Калинински район вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи налогпа культсбор укҫине пухас тӗлӗшпе начар ӗҫлет, самообложени укҫине уйӑх ҫурӑ хушшинче пачах та пухман.

Первомайски район ирӗклӗ страховани укҫипе тата вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи налога пухас енӗпе юлса пырать. Ирӗклӗ страховани укҫине тӑваттӑмӗш кварталта 13 процент ҫеҫ пухнӑ, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи налога вара пӗр пус та пухман.

Асӑннӑ районсенчи перекет кассисем те начар ӗҫлеҫҫӗ. Укҫа-тенкӗне перекет кассинче тытни усӑлли ҫинчен ӑнлантарса пама вӗсен работникӗсем халӑх хушшине тухса та курмаҫҫӗ. Ҫавӑнпа ку районсенче перекет кассине укҫа-тенкӗ хывасси ӳсмест.

Первомайски, Калинински районсенчи финанс органӗсем начар ӗҫлени вӗсен ӗҫне райсовет исполкомӗсем тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑманнинчен те килет. Укҫа-тенкӗ пухас ӗҫе вӑйлатас вырӑнне райфопа перекет кассисен заведующийӗсене яла чылай вӑхӑтлӑха кӑларса яраҫҫӗ. Первомайски районри уйрӑм хуҫалӑхсем государство умӗнче пысӑк парӑмра пулин те, райсовет исполкомӗ вӗсем тӗлӗшпе нимӗнле мерӑсем те йышӑнмасть.

Укҫа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе юлашки вӑхӑтра Ҫӗмӗрле хулийӗ (горфо заведующийӗ Степанов юлташ) ҫителӗксӗр ӗҫлет. Тӑваттӑмӗш кварталти финанс планне кунта 25 проц. тултарнӑ. Анчах ӗҫе лайӑхлатас тӗлӗшпе Ҫӗмӗрле хула совечӗн исполкомӗ нимӗнех те тумасть.

Асӑннӑ районсемпе Ҫӗмӗрле хулин финанс планне тултарас ӗҫре юлса пыма нимӗнле сӑлтав та ҫук. Юлса пынине пӗтерме пулӑшакан майсем вӗсен ҫителӗклӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пек тимлӗн ӗҫлени ҫеҫ кирлӗ.

И. ОХОТНИКОВ,
ЧАССР Финанс Халӑх Комиссарӗн заместителӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Ноябрӗн 20-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Ноябрӗн 20-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче, **Нальчикран** кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре тата **Туапсерен** ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре ҫапӑҫнӑ.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн атакисене сирсе тӑнӑ тата хӑйсен позицийӗсене тӗреклетнӗ. Хуларан кӑнтӑралларахра совет подразделенийӗ ятсӑр высотана тытса илсе унта тӗрекленсе ларнӑ. Ҫав ҫапӑҫусенче 400 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ҫити вӗлернӗ тата противникӑн 30 пулеметне, 10 минометне, 24 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехри участоксенчен пӗринче Н-ски гвардейски часть противникӑн 4 атакине сирсе янӑ. Ҫав ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 9 танкне персе ҫӗмӗрнӗ, 2 танкне ҫунтарса янӑ. Тепӗр участокра румын батальонӗн штабне аркатса тӑкнӑ тата 200 гитлеровеца ҫити вӗлернӗ. Пирӗн боецсем 9 миномет (вӗсенчен пӗри—ултӑ кӗпҫеллӗ), 2 оруди, 17 пулемет, 1000 ҫити снарядпа мина, 700 пин винтовка патронӗ, 50 километр тӑршшӗ телефон кабелӗ тата ытти тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗсем тытса илнӗ.

* * *

Туапсерен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн войскӑсем противникӑн пысӑк мар групписсен атакисене сирсе тӑнӑ тата хӑйсен позицийӗсене тӗреклетнӗ. Халӑх пурӑнакан пӗр пунктра, пирӗн подразделени йышӑнса илнӗскерте, 10 автомашина, 3 мотоцикл боеприпассен складне, япаласен складне тата пӗр радиостанци тытса илнӗ.

Халӑх пурӑнакан ҫав пунктшӑн пынӑ ҫапӑҫура 100 гитлеровеца ҫити вӗлернӗ. Старши лейтенант Окунев ертсе пыракан разведчиксен группи противникӑн тылне кӗрсе кайнӑ та тусем хушшинчи пӗр ҫул ҫинче засада тунӑ. Ҫав ҫулпа нимӗҫ салтакӗсен взвочӗ пынӑ. Пирӗн боецсем гитлеровецсене ҫывӑхах янӑ та пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн разведчиксем вара пӗр ҫухатусӑрах хӑйсен чаҫне таврӑннӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗнче артиллерирен тата пӑшалсемпе пулеметсенчен хирехирӗҫ персе тӑнӑ. Пур йышши хӗҫпӑшалсемпе те персе, 620 нимӗҫ салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗр участокра пирӗн артиллери, сасартӑк вӑйлӑн пеме тытӑнса, нимӗҫсен икӗ батальон таран пехотине сапаласа янӑ. Тепӗр участокра пирӗн разведчиксен ушкӑнӗ противник вырнаҫнӑ вырӑна кӗрсе кайнӑ та, гранатӑсем ывӑтса, нимӗҫсен 5 блиндажне ҫӗмӗрнӗ тата 40 гитлеровеца вӗлернӗ. Разведчиксем 2 ручной пулемет, 5 автомат тата 2.500 патрон тытса илнӗ.

* * *

Ленинград фронтӗнче пирӗн снайперсем виҫӗ кун хушшинче 800 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн артиллери 12 дзота ишӗлтернӗ тата противникӑн 4 станковӑй пулеметне, 2 орудине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нимӗҫсем тытса илнӗ совет районӗсенче кӗрешекен партизансен отрячӗсем противникӑн ҫыхӑнӑвӗсене пыра-пыра ҫапаҫҫӗ. Ноябрӗн 13-мӗшӗпе 17-мӗшӗ хушшинче вӗсем нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсен 66 поездне ӳпӗнтерсе янӑ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, 2 бронепоезда, 16 паровоза тата тӗрлӗ ҫар хатӗрӗсем тиенӗ 200 вагонпа платформӑна ҫӗмӗрнӗ. Ҫав вӑхӑт хушшинчех тата 10 кӗпере сирпӗнтерсе янӑ. Крушенисем туса тата гитлеровецсемпе ҫапӑҫса, партизансем нимӗҫ захватчикӗсене нумай пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нимӗҫсен 12-мӗш артиллерийски полкӗнчен тыткӑна лекнӗ салтак А. Нагель ҫапла каласа панӑ: «Пирӗн дивизи тӑракан вырӑнта нимӗҫсен ҫар влаҫӗсем халӑхран мӗнпур выльӑх-чӗрлӗхе тата пӗтӗм тырра туртса илнӗ. Ҫынсене ирӗксӗрлесе ҫар укреплениийӗсем тунӑ ҫӗрте ӗҫлеттереҫҫӗ. Нормӑсене тултарманшӑн вӗсене розгӑпа ҫаптараҫҫӗ с 20 сехете сивӗ шыва кӗртсе лартаҫҫӗ. Ку вӑл вӗлернипе пӗрех, мӗншӗн тесессӗн ҫавӑн пек наказани тӳсекен ҫынсем вӗсем вилеҫҫӗ».

Ноябрӗн 21-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Ноябрӗн 21-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле фронтсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн чаҫсем противникӑн вак групписсен атакисене сирсе тӑнӑ. Хулан кӑнтӑр енчи хӗрринче артиллерирен тата минометсенчен хире-хирӗҫ персе тӑнӑ. Пирӗн разведчиксен группи противникӑн окопӗсене кӗрсе кайнӑ та 3 блиндажа ҫӗмӗрнӗ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ тата 80 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Сталинградшӑн пыракан ҫапӑҫусенче снайпер старши сержант Сабаев юлташ 73 нимӗҫе вӗлернӗ, красноармеец Хужматов юлташ 117 нимӗҫе, снайпер Зайцев юлташ 161 нимӗҫе, лейтенант Навицкий юлташ 80 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре противникпа ҫапӑҫнӑ. Н-ски часть гитлеровецсем вӑйлӑн хӳтӗлесе тӑнӑ пӗр высотана нимӗҫсенчен тасатнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 200 виллине ҫити выртса юлнӑ. Тепӗр участокра гвардеец-минометчиксем сасартӑк вӑйлӑн пере-пере ярса нимӗҫсен 2 танкне тата 4 автомашинине ҫунтарса янӑ, противникӑн пехотине пӗр рота таран пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Моздок районӗнче Н-ски чаҫӑн боецӗсем противника атакӑласа 100 гитлеровеца ытла вӗлернӗ, 5 автомашинӑна тата 2 противотанковӑй орудие пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав участокрах пирӗн артиллери противникӑн 12 дзочӗпе блиндажне ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗн пӗр участокӗнче Н-ски чаҫӑн пехотнӑй подразделенийӗ противникӑн тӗреклетнӗ рубежне атакӑланӑ. Кӗске вӑхӑт хушши ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн пирӗн боецсем гитлеровецсене ҫав рубежран хӗссе кӑларнӑ. Нимӗҫсен 70 салтакпа офицер вилнӗ. Пирӗннисем 7 пулемет тата пӗр миномет тытса илнӗ.

* * *

Калинин фронтӗнче артиллерирен хире-хирӗҫ персе тӑнӑ тата разведчиксем шыраса ҫӳренӗ. Колосов лейтенант ертсе пыракан разведчиксен группи минӑсем хурса тухнӑ вырӑн урлӑ каҫса, противник тӑракан вырӑна пырса тухнӑ. Пирӗн боецсем 25 гитлеровеца вӗлернӗ те тӑшманӑн пулеметне илсе хӑйсен чаҫне таврӑннӑ. Козлов юлташ командир пулса тӑракан чаҫӑн гвардеец-минометчикӗсем сасартӑк вӑйлӑн пере-пере ярса, противник артиллерийӗн 3 батарейине орудисен расчечӗсемпе пӗрлех пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Хура тинӗсри флотӑн кӗҫӗн лейтенант Пшеченко ертсе пыракан морякӗсен ушкӑнӗ противникӑн инҫетри тылне пырса аннӑ. Краснофлотецсем ҫыранри хурала тапӑннӑ та 15 нимӗҫ салтакӗпе офицерне вӗлернӗ. Унтан, противник пӑрахса хӑварнӑ хӗҫпӑшалсене пуҫтарса илсе, краснофлотецсем пӗр ҫухатусӑрах хӑйсен чаҫне таврӑннӑ.

* * *

Ҫурҫӗр Кавказра кӗрешекен отрядри партизансен пӗр ушкӑнӗ противникӑн поездне крушени тунӑ. 2 паровоз тата 20 вагон ҫӗмӗрӗлнӗ.

* * *

Коротояк хулинче нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем ҫав хулари 12 ҫемьене пӗр ҫын юлмиччен касса тухнӑ. Гитлерла бандитсем 16 ҫулхи хӗре Башкарсӑна мӑшкӑлланӑ та персе пӑрахнӑ. Нимӗҫ офицерӗ выранти больницӑн фельдшерне Мария Михайловна Гаршинӑна вӑл ҫав офицерпа пурӑнма килӗшменшӗн тата ӑна хӑйӗн хваттерӗнчен хӑваласа кӑларнӑшӑн персе вӗлернӗ.

* * *

Нимӗҫ войскисем Лиона (Франция) пырса кӗнӗ кун виҫӗ тӗлте взрыв пулнӑ. Бомбӑсенчен пӗри нимӗҫ офицерӗсем вырӑнаҫнӑ отельре ҫурӑлса кайнӑ.

Нимӗҫсене Владикавказ районӗнче аркатса тӑкни

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, ноябрӗн 19-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехри тата Владикавказ (Орджоникидзе хули) районӗнчи юлашки кунсенчи ҫапӑҫусем пирӗн чаҫсем активлӑн кӗрешнипе паллӑ пулса тӑраҫҫӗ. Совет войскисем нимӗҫсене, ҫапӑҫусем вӑраха ляпланнӑ хыҫҫӑн е позициллӗ кӗрешӳ хыҫҫӑн мар, оборонӑллӑ хаяр ҫапӑҫусем хӗрсе пынӑ вӑхӑтра, пирӗн чаҫсем пӗр рубежран тепӗр рубеж патне чакса пынӑ вӑхӑтра, пырса ҫапрӗҫ. Наступлени тӑвакан противник урса кайса хӗснине совет войскисем чарса лартрӗҫ, унтан вара пуҫарулӑха хӑйсен аллине тытса илчӗҫ.

Нальчик районне войскӑсем пысӑк йышлӑн пухса тӑратса, вӗсене авиаципе пулӑшса тӑрса (хӑшпӗр чухне фашистсем 70-шер самолетпа пыра-пыра тапӑннӑ), гитлерла командовани ҫиҫӗмле хӑвӑртлӑхпа Владикавказа (Орджоникидзе хулине) тытса илме ӗмӗтленнӗ.

Тӑшманӑн ҫак вырӑнта кӗрешекен вӑйӗсен составӗнчен ятарласа ударнӑй группа, хӑйне уйрӑм командовани парса уйӑрнӑ пулнӑ. Ҫав ударнӑй группа совет чаҫӗсен оборонине ҫӗмӗрсе кӗме, Кавказа хӳтӗлекенсене паникӑна ӳкерме шутланӑ.

Фашистла войскӑсен тактики—яланхи пекех савӑлланса кӗресси пулнӑ. Ансӑр участокра пирӗннинчен йышлӑрах вӑйӗсем пухса тӑратса, пирӗн чаҫсен боевой йӗркисем ҫине тата вӗсен тылӗсем ҫине бомбӑсем хаяррӑн пӑрахса тӑрса, гитлеровецсем совет оборонине ҫӗмӗрсе кӗме, военно-грузински ҫул патне ҫӗнтерӳллӗ маршпа пырса ҫитме хапсӑннӑ. Вӗсем хӑйсен вӑйӗсене ҫӗрле пухса йӗркеленӗ, ҫавӑн пекех ҫӗрле резервсем куҫарнӑ. Пирӗн вӑйсене татӑклӑ прорыв тума палӑртнӑ участокран пӑрса ярас шутпа нимӗҫсем ытти участоксенче юри наступлени тунӑ пек кӑтартнӑ.

Анчах та тӑшманӑн планӗсем арканса кайрӗҫ. Вӑл пирӗн шалтан тӗреклетнӗ оборонӑпа тӗл пулчӗ. Малалла ярса пуснӑ кашни утӑм нимӗҫсемшӗн питех те хакла ларчӗ. Пирӗн войскӑсем вӑйлӑнрах та вӑйлӑнрах хирӗҫ тӑма тытӑнчӗҫ.

Ҫав операцисен чи йывӑр саманчӗ ноябрӗн 3-мӗшӗнче пулчӗ. Ҫав кун каҫалапа противник Орджоникидзе хули патне пымалли вырӑнсем тӗлне тухрӗ. Нимӗҫсен танковӑй дивизирен тата пехотӑн виҫӗ полкӗнчен тӑракан ударнӑй группировки нумай малалла шӑтарса кӗнӗччӗ. Ҫав вӑйсем, пире татӑклӑнах пырса ҫапма хатӗрленсе, Н. районӗнче пухӑнса пынӑ.

Фашистсем пирӗн Н-ски чаҫӑн ҫирӗплӗхӗ ҫине пырса тӑрӑнчӗҫ. Ҫав чаҫа Ролдыш командирӑн чаҫӗнчи зенитчиксем активлӑн пулӑшса тӑчӗҫ. Наступлени туса пыракан гитлеровецсем ҫине вӗсем 1.500 снаряд ытла кӑларса ячӗҫ, нимӗҫсен 7 танкне, 5 бронемашинине пӗтерсе тӑкрӗҫ, тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсене темиҫе ҫӗршер ҫынна вӗлерсе пӗтерчӗҫ.

Фашистсен татӑклӑ наступленине ҫапла пирӗн чаҫсем сирсе пӑрахрӗҫ. Кун хыҫҫӑнхи кунсенче фашистсем ҫӗнӗ атакӑсем турӗҫ, анчах вӗсем те ӑнӑҫсӑр путланса ларчӗҫ. Ҫакӑнпа пӗрлех, пирӗн чаҫсем чылай ӑста маневрсем туса, фашистсен ударнӑй группировкине япӑх лару тӑрӑва кӗртсе ӳкерчӗҫ. Пирӗн войскӑсен тӑшман группировкине флангсенчен пырса ҫапма май пулса тӑчӗ.

Халичченхи оборонӑллӑ ҫапӑҫусенче тӑшманӑн вӑйне хавшатса ҫитерсе тата хӑйсен вӑйӗсене ҫӗнӗлле пухса йӗркелесе, пирӗн чаҫсем часах наступление куҫрӗҫ. Пур йышши войскӑсем те пӗр-пӗринпе таччӑн ҫыхӑнса тӑрса кӗрешнипе вӗсем противника халӑх пурӑнакан Н. пункт патне сирсе ывӑтрӗҫ. Ҫав Н. пункта фашистсем тӗреклетнӗ база туса хунӑ пулнӑ. Ӑна тытса илсе, пирӗн чаҫсем противника тепӗр пункт патнелле хӗссе пычӗҫ.

Пирӗн чаҫсем пырса ҫапнин хӑватне вӑйсӑрлатас шутпа противник контратакӑсем туса пӑхрӗ, анчах та ҫакна пула унӑн ҫухатӑвӗсем татах та ытларах ӳсрӗҫ. Вара хӑйсен ударнӑй группин лару-тӑруне ҫӑмӑллатас шутпа фашистла войскӑсем хушӑри участоксенче темиҫе хутчен атакӑсем туса хӑтланчӗҫ, анчах ҫакӑ та вӗсене пулӑшмарӗ. Пирӗн чаҫсем тӑшмана малалла аркатса пычӗҫ. Ноябрӗн 11-мӗшӗнче каҫ пулас умӗн фашистсене халӑх пурӑнакан иккӗмӗш пунктран та хӗссе кӑларчӗҫ. Фашистсен ҫапса аркатнӑ ударнӑй группин юлашкийӗсем, хӑйсен хыҫне автомашинӑсемпе боевой техникӑна тата ытти ҫар хатӗрӗсене пӑрахса хӑварса, нимӗн йӗркисӗр каялла чакрӗҫ.

Нумай кун хушши пынӑ ҫапӑҫусенче Кавказа хӳтӗлекенсем нимӗҫсен 13-мӗш танковӑй дивизине, «Бранденбург» ятлӑ полкне, 45-мӗш велобатальона, 7-мӗш сапернӑй батальона, противотанковӑй оборонӑн 525-мӗш дивизионне, нимӗҫсен 1-мӗш горно-стрелковӑй дивизин батальонне тата 336-мӗш уйрӑм батальона аркатса тӑкрӗҫ. Нимӗҫсен 23-мӗш танковӑй дивизине, румынсен 2-мӗш горно-стрелковӑй дивизине тата противникӑн ытти чаҫӗсене чылай пысӑк ҫухатусем тӳстернӗ.

Ҫав кунсенчи ҫапӑҫусенче фашистсен 5.000 ытла салтакӗпе офицерӗ вилсе пӗтнӗ. Тӑшманӑн боевой техникине нумай пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫакӑн пек трофейӑсем: 140 танк, 70 оруди, 2.350 веломашина, 95 миномет, 183 мотоцикл, пулеметсемпе минометсем, автоматсемпе винтовкӑсем, 1 миллион ытла патрон тата ытти тӗрлӗ хӗҫпӑшалсемпе ҫар пурлӑхӗ нумай тытса илнӗ.

Подполковник Я. БЛОХ.
(«Правда», ноябрӗн 20-мӗшӗ).

40 колхоз государство умӗнчи парӑмсене парса татрӗҫ

КУКЕҪ, ноябрӗн 21-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Шупашкар районӗнчи колхозсем фронтри пек ӗҫлемелли ҫирӗмкунлӑхра кунран кун паха тӗслӗхсем кӑтартса ӗҫлеҫҫӗ. Сталин юлташӑн ноябрӗн 6-мӗшӗнче тунӑ доклачӗпе паллашнӑ хыҫҫӑн нумай колхозсенче ӗҫ тухӑҫлӑхӗ татах вӑйлӑн ӳсрӗ. Авӑн ҫапас ӗҫе вӗҫленӗ, государство умӗнчи парӑмсене парса татнӑ колхозсен хисепӗ нумайланса пырать.

Ноябрӗн 19-мӗшӗ тӗлне районри 96 колхозран 56-шӗ авӑн ҫапса пӗтерчӗҫ, 40 колхоз государствӑна тырӑ парса татрӗҫ. Ҫапла, ноябрӗн 19-мӗшӗ тӗлне, район авӑн ҫапмалли плана 95,8 процент тултарчӗ, государствӑна тырӑ 83,5 процент парса татрӗ. Ноябрӗн 15-мӗшӗпе 20-мӗшӗ хушшинче хатӗрлев пунктне 273 тонна тырӑ леҫсе панӑ.

Шӑмӑршӑ, Шӗнерпуҫ, Ҫӗньял-Ойкасси ялсовечӗсене кӗрекен колхозсем фронтри пек хастарлӑн ӗҫлеҫҫӗ. Ку ялсоветсенчи колхозсем пурте авӑн ҫапса пӗтерне, ҫак кунсенчех государство умӗнчи парӑмсене парса татаҫҫӗ.

Т. ЛОГИНОВ.

Хӑвӑртлӑхсене чакарнӑ

ҪӖМӖРЛЕ. **(Хамӑр корр.).** Район авӑн ҫапас ӗҫе ноябрӗн 18-мӗшӗ тӗлне 88 процент ытларах пурнӑҫланӑ. Ҫак вӑхӑт тӗлнех 17 колхоз авӑн ҫапса пӗтернӗ.

Анчах, пӗтӗмӗшпе илсен, юлашки вӑхӑтра авӑн ҫапас ӗҫ сӳрӗкленчӗ. Нихӑш кунра та график пурнӑҫланса пымасть. Вӑтамран куллен 100 гектар ытларах ҫапмалла пулсан, ноябрӗн 16-мӗшӗнче 62 гектар, 17-мӗшӗнче ӳнтан та сахалтарах ҫапнӑ.

Авӑн ҫапас ӗҫ ҫителӗксӗр пыни, чӑн малтанах, молотилкӑсемпе туллин усӑ курманнинчен, килет. Аҫта молотилкӑсемпе япӑх усӑ кураҫҫӗ, ҫавӑнта авӑн ҫапас ӗҫ юлса пырать. «Лесной огонек» колхозра, акӑ, виҫӗ кун ӗнтӗ молотилка ӗҫлемесӗр ларать. Ҫавна пула кунта ӗҫ пачах чарӑнса ларчӗ, тӑпачӑсемпе те ҫапмаҫҫӗ.

«Красноармеец» колхозра та ӗҫ ҫавтери сӳрӗккӗн пырать. Кунта та МТС-ран килсе пулӑшасса кӗтсе лараҫҫӗ. График тӑрӑх колхозӑн кашни кун 25 гектар ҫапмалла, анчах вӑл ноябрӗн 16-мӗшӗпе 17-мӗшӗнче 5-шер гектар ҫеҫ ҫапнӑ.

Ҫак ҫитменлӗхсем ҫинчен райҫӗрӗҫ работникӗсем лайӑх пӗлеҫҫӗ, анчах вӗсем ҫав ҫитменлӗхсене хӑвӑртрах пӗтерес тесе конкретнӑй ӗҫсем туни курӑнмасть. Ку енӗпе районри партипе совет организацийӗсем те ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ.

Вӑрлах фондне тума васкамаҫҫӗ

СӖНТӖРВӐРРИ, ноябрӗн 20-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Районри чылай колхозсем вӑрлӑх фондне тырӑ уйӑрса хурас тӗлӗшпе тивӗҫлипе тӑрӑшмаҫҫӗ. Ӗнерхи кун тӗлне тырра тата ҫӗрулмине вӑрлӑхлӑх 20 колхоз ҫеҫ ҫителӗклӗ таран уйӑрса хунӑ. Районӗпе илсен, тӗштырӑсене 51 процент, пӑрҫа йышши тырӑсене 91 процент, ҫӗрулмине 83 процент ҫеҫ уйӑрса хунӑ. Страховой фонда хумалли тырра 34 процент ҫеҫ хывнӑ.

Сталин ячӗпе тӑракан колхоз вӑрлӑх фондне тата 320 центнер, «Красная Волга» колхоз 650 центнер, «Верный путь» колхоз 950 центнер уйӑрса хумалла. Ворошилов ячӗпе тӑракан, «Красноармеец», «Трактор» тата Горький ячӗпе тӑракан колхозсем вӑрлӑх фондне тума пачах тытӑнман. Райҫӗрӗҫ пайӗ вӑрлӑх фондне уйӑрса хурас ӗҫе йӗркеллӗн туса пырас тӗлӗшпе колхозсене график туса паман.

Вӑрлӑхлӑх уйӑрса хунӑ тырӑсене лайӑх пуҫтарса хумалла, вӗсен пахалӑхне халех тӗрӗслемелле. Ҫапла халӗ вӑрлӑхлӑх уйӑрнӑ тырӑсене районри тӗпчев лабораторине анализа тӑратас пулать. Райсовет исполкомӗпе ВКП(б) райкомӗ кӑтартса панӑ тӑрӑх, районри колхозсенче вӑрлӑхлӑх тырӑ уйӑрас тата сортлас ӗҫе ноябрӗн 15-мӗшӗнче вӗҫлемелле, декабрӗн 1-мӗшӗ тӗлне анализа тӑратмалла. Анчах ҫакна нумай колхозсем пурнӑҫа кӗртсе пымаҫҫӗ.

Вӑрлӑх фондне чи таса та шултӑра тырӑсене, чи лайӑх ҫӗрулмине уйӑрса хумалла. Вӑрлӑхлӑх уйӑрнӑ тырӑсене амбарсене сортласа кӗртес пулать. Хӑшпӗр колхозсен вӑрлӑхлӑх уйӑрнӑ тыррисене пӑхса тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн ҫакӑ курӑнать: нумай колхозсенче вӑрлӑха япӑх тасатнӑ, е пачах та тасатман. «Труд» колхозӑн вӑрлӑхлӑх уйӑрнӑ тырри хӑйӗн тасамарлӑхӗпе акма юрӑхсӑр, вӑл кондициллӗ мар.

Вӑрлӑхлӑх ҫӗрулмине уйӑрса хурас тата ӑна лайӑх пӑхса усрас ӗҫ те чылай колхозсенче япӑх пулса пырать. Уйӑрса хунӑ 2.217 тонна ҫӗрулмин 12 проценчӗ халех ҫӗрӗк, лартма юрӑхсӑр. Вӑрлӑхлӑх тырра тата ҫӗрулмине халех ҫителӗклӗ таран уйӑрса хумалла. Вӗсене лайӑх упраса хӗл каҫармалла.

Агроном Н. КОНДАКОВ.

ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕсен канашлăвĕ

Ноябрĕн 19—20-мĕшĕсенче ВКП(б) Обкомĕ парти райкомĕсемпе горкомĕсен кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕсен канашлуне ирттерчĕ. Канашлу ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен кадрсен отделĕсем вăрçă вăхăтĕнче мĕнле ĕçлени çинчен тата малашнехи задачăсем çинчен ВКП(б) Канаш горкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕн **Данилов** юлташăн тата Сĕнтĕрвăрри, Ишлей, Елчĕк райкомĕсен кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕсен **Ростовцев, Андреев, Степанов** юлташсен доклачĕсене итлесе сÿтсе яврĕ.

Канашлу ĕçĕсене ВКП(б) Обкомĕн секретарĕсем **Чарыковпа Никитин** юлташсем хутшăнчĕç.

Вăрçă кунĕсенче Канаш хулинчи промышленноçпа транспорт предприятийĕсенче, промартельсенче çĕршер çамрăк рабочисем, килхуçи арăмĕсем ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсем кĕске вăхăт хушшинче «арçынсен» профессийĕсене вĕренсе алла илчĕç.

— Предприятисене, цехсене, бригадăсене ертсе пыма эпир пĕр иккĕленмесĕрех хĕрарăмсене лартрăмăр. Вĕсем ертсе пыракан предприятисем, цехсем тата бригадăсем халĕ пурте тенĕ пекех ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Сăмахран, горпищекомбинат (управляющийĕ Захватова юлташ), çăкăр завочĕ (директорĕ Цветкова юлташ) уйăхран-уйăха производство планне ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ,—тет Данилов юлташ.

Данилов юлташ малалла партипе комсомолăн тата промышленноçпа транспорт кадрĕсем хушшинче ĕçлени, вĕсене пулăшу пани, ĕçлеме вĕрентни тата ĕçлеме пултарайман кадрсене улăштарни çинчен каласа пачĕ.

Ростовцев юлташ хăйĕн докладĕнче ВКП(б) Сĕнтĕрвăрри райкомĕн кадрсен отделĕ колхоз кадрĕсене çирĕплетес тĕлĕшпе вăрçă кунĕсенче тунă хăшпĕр ĕçсем çинчен, колхозсене ертсе пыракан кадрсене суйласа лартнă чухне пулнă йăнăшсем çинчен, комсомолецсемпе хĕрарăмсене ертсе пырас ĕçсене явăçтарни çинчен ытларах чарăнса тăчĕ.

— Кадрсене тĕпчесе вĕренес, вĕсене ĕçе уйăрса лартса куллен пулăшса пырас тĕлĕшпе пирĕн пысăк çитменлĕхсем пур-ха, — тет вăл. — ВКП(б) райкомĕн кадрсен отделĕ комсомол организацийĕсене çирĕплетес тĕлĕшпе начар ĕçлет-ха. Районри 40 колхозран 10-шĕнче ку таранччен комсомол организацийĕсем çук.

ВКП(б) Ишлей райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ **Андреев** юлташ докладĕнчен вĕсем колхозсене ертсе пырас ĕçе тимлĕн тĕпчесе вĕренмен кадрсене лартни, колхозсенчи шутĕç кадрĕсем çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхни, совет, судпа прокуратура тата вырăнти промышленность предприятийĕсенчи кадрсем хушшинче çителĕксĕр ĕçлени курăнчĕ.

— Колхозсене ертсе пыма тĕпчесе вĕренмен кадрсенех лартнă пирки, кăçал пирĕн 11 çынна колхоза ертсе пырас ĕçрен хăтармалла пулчĕ, — тет Андреев юлташ. — Колхозсен кадрĕсем часчасах улшăнса тăчĕç. Çакă вăл ялхуçалăх ĕçĕсенче пысăк чăрмав кÿчĕ. Пирĕн районри 18 колхозра кĕрĕшнĕ счетоводсем ĕçленĕ. Çакă вăл ялхуçалăх артелĕн уставне пăсни пулнă. ВКП(б) райкомĕн кадрсен отделĕ çак çитменлĕхе хăвăртрах пĕтерессишĕн тăрăшман.

Андреев юлташ ВКП(б) райкомĕн кадрсен отделĕ юлашки вăхăтра колхоз кадрĕсене çирĕплетес тĕлĕшпе лайăхрах ĕçлеме пуçлани çинчен калать. Колхоз председателĕсем пулма кăçал отечественнăй аслă вăрçăн инвалидĕсене 12 çынна, хĕрарăмсене 12 çынна лартнă.

ВКП(б) Елчĕк райкомĕн кадрсен отделĕ вăрçăн 16 уйăхĕ хушшинче ертсе пырас ĕçе 1.009 çынна лартнă, вĕсенчен 788-шĕ хĕрарăмсем. Партипе комсомолăн ĕçĕнче 36 хĕрарăм, колхозсене, бригадăсене тата фермăсене ертсе пынă çĕрте 508 хĕрарăм ĕçлеççĕ. Кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем тунă. 1942 çулта пурĕ 1.042 çын вĕрентсе хатĕрленĕ, вĕсенчен 722-шĕ — хĕрарăмсем. Çамрăк кадрсен политикăллă пĕлĕвĕсене ÿстересси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхнă. Ялсенче ертсе пырас çĕрте ĕçлекен работниксем валли парти историне вĕренмелли, Совет Союзĕнчи тата тĕнчери лару-тăрупа паллаштармалли кружоксем организациленĕ. Кăçал кашни колхозрах 12—14 хутчен докладсемпе лекцисем ирттернĕ, партипе комсомолăн пуçламăш организацийĕсен секретарĕсемпе 17 хутчен, ял-совет председателĕсемпе 12 хутчен, финанс работникĕсемпе 18 хутчен канашлусем тата семинарсем ирттернĕ.

Анчах ВКП(б) райкомĕн кадрсен отделĕн ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Хĕрлĕ Çара кайнă çынсем вырăнне çĕнĕ кадрсем çийĕнчех тупса лартманнисем, колхозсене ертсе пырас ĕçе тĕпчесе вĕренмен çынсене лартнисем пулнă.

Докладсем хыççăн тухса каланă **Платонов** (Шăмăршă), **Знаменская** (Канаш), **Скворцов** (Калинино), **Ефимов** (Куславкка), **Голованов** (Пăрачкав), **Атлашева** (Октябрьское) юлташсем хăйсен опычĕсемпе паллаштарчĕç, кадрсен отделĕсен ĕçне лайăхлатма сĕнÿсем пачĕç.

ВЛКСМ Обкомĕн кадрсем тĕлĕшпе ĕçлекен секретарĕ **Аверьянова** юлташ хăшпĕр ВКП(б) райкомĕсем комсомол кадрĕсене çителĕксĕр пулăшса пыни, хăшпĕр çĕрте вĕсемпе интересленменни, вĕсемшĕн тăрăшманни çинчен чарăнса тăчĕ.

Канашлура ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ **Чарыков** юлташ тухса каларĕ. Вăл ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен кадрсен отделĕсен ĕçне тишкерчĕ тата вĕсем çитес вăхăтра тумалли ĕçсем çинчен чарăнса тăчĕ. Хăшпĕр çĕрте хĕрарăмсене ертсе пырас ĕçсене лартма хăюсăрланса, иккĕленсе тăраççĕ. Çакă вăл йăнăш. Хĕрарăмсене, эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсене, вăрçă инвалидĕсене ертсе пыракан вырăнсене хăюллăнрах лартмалла.

Чарыков юлташ ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен секретарĕсем кадрсене, уйрăмăнах комсомол кадрĕсене, çителĕксĕр пĕлнине паллă турĕ. Пăрачкав, Кувакино, Йĕпреç районĕсенче кадрсене вĕрентсе хатĕрлес, вĕсемшĕн тăрăшас, ĕçре пулăшу парас тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пурри çинчен каларĕ.

Канашлу вĕçĕнче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ **Никитин** юлташ тухса каларĕ. Вăл хальхи вăхăтра кадрсем çине нихăçанхинчен те тимлĕнрех çавăрăнса пăхма кирли, вĕсене хаклама, хăйсен вырăнĕсенче тĕрĕс усă курма пĕлни кирли çинчен каларĕ.

Никитин юлташ ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен кадрсем тĕлĕшпе ĕçлекен секретарĕсене малашнехи ĕçре кадрсене вĕрентсе хатĕрлес ĕçе куллен туса пырасси тата кадрсем тăтăшах улшăнса тăнине пĕтересси çине уйрăмăнах тимлĕн çавăрăнса пăхма хушрĕ.

Çамрăксен фронтри пек ĕçлекен бригади

ÇЕМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Комбинатри çамрăк рабочисем юлашки вăхăтра татах та тимлĕрех, хастарлăрах ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсем заказсене пурнăçланă çĕрте ытти рабочисене пример кăтартаççĕ.

Планран ирттерсе продукци туса кăларас тĕлĕшпе уйрăмах комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригади лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Бригадăра пĕтĕмпе 13 çын. Ăна çамрăк стахановка комсомолка Дуся Губанихина ертсе пырать. Ку бригада членĕсем çăннипех фронтри пек ĕçлеççĕ. Хуть те мĕнле заказ пулсан та, вĕсем ăна кăтартнă срокчен малтан туса пĕтереççĕ. Заказа пурнăçлас тесе цеха ик-виçĕ сехет хушши кăна мар, смени-сменипе юлса ĕçлеççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ ку бригадăна рабочисем чи малта пыракан бригада тесе шутлаççĕ.

Нумаях та пулмасть çак бригадăна çĕнĕ производствăна куçарчĕç. Бригада членĕсемшĕн ку ĕç пачах çĕнĕ, ку таранччен курман ĕç пулнă. Анчах та çамрăк рабочисем йывăрлăха хăвăрт çĕнтерчĕç, часах пĕрин хыççăн тепĕри ĕç нормисене тултарса пыма пуçларĕç. Халĕ вĕсем нормăсене ирттерсе тултараççĕ.

Бригадир Губанихина юлташ кăткăс детальсем тунă çĕрте ĕçлет. Кунта уйрăмах технологи процесне лайăх пĕлни тата хăвăрт ĕçлени кирлĕ. Губанихина юлташ халĕ нормăна икĕ хут ирттерсе тултарать. Вăл туса кăларнă продукци пахалăхĕ те лайăх.

Бригада членĕсем хăйсен бригадирĕнчен пример илеççĕ, ун пек ĕçлеме тăрăшаççĕ. Нюра Серебрякова октябрĕн юлашки кунĕсенчен вара кулленхи нормăна 150—200 процент тултарса пыма пуçларĕ. Çамрăк стахановец Харис Яхин çак кунсенче сменăри нормăна 236 процент тултарса çĕнĕ ÿсĕм турĕ.

Поля Вашуркинăпа Катя Шашина пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем ялан нормăна ытлашшипех тултарма пулнă. Ноябрĕн малтанхи кунĕнчен пуçласа иккĕшĕ те заданисене 160—190 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Цехра кăтарту хăми çакăнса тăрать. Çамрăк фронтовиксен ĕç кăтартăвĕсене пĕлес килсен, рабочисем çак хăма çине кăна килсе пăхаççĕ. Ун чухне вара кашнинченех пĕр сăмах илтме пулать:

— Маттур ачасем, фронтри пек ĕçлеççĕ.

* * *

Ремонтно-механически цехăн коллективĕ социализмлă ăмăртăва сарса пынă май кунран-кун лайăхрах результатсем кăтартать. Вăтамран илсен, вăл хăйне панă заданине кулленех ирттерсе тултарать.

Сталин юлташăн Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарни çинчен тунă доклачĕпе хавхаланса, тимĕрçĕ Арининпа унăн молотобоецĕ Лобачков юлташсем ноябрь уйăхĕнчи ĕç нормисене 10 кун хушшинчех ирттерсе тултарчĕç. Киреев, Горячев, Тарасов тата Ашеркин юлташсем те ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне хăйсен уйăхри заданийĕсене ирттерсе тултарчĕç.

Çак кунсенче Циглер, Ненастин тата Ищенко юлташсем пысăк хăвăртлăхсемпе ĕçлеме пуçларĕç. Вĕсем, октябрь уйăхĕнчи нормăсене 220—276 процент тултарнăскерсем, халь куллен 3-шер норма туса пыраççĕ

Х. ЛИСИН.

Ют çĕршывсенче

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ВОЙСКИСЕМ ТЕМИÇЕ ТĔЛТЕ ТУНИС ЧИККИ УРЛĂ КАÇНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Англин пĕрремĕш çарĕн малта пыракан пайĕсем союзниксен войскисен парашютисчĕсемпе пĕрле тата Францин Жиро генерал ертсе пыракан войскисемпе пĕрле темиçе тĕлте Тунис чикки урлă каçнă. Француз влаçĕсен приказĕ тăрăх, Çурçĕр Африкăра 1939 çулта çара каймалла пулнă çынсене пурне те мобилизациленĕ.

«Дейли мэйл» хаçатăн союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен штабĕ çумĕнче тăракан корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Гитлер Тунисра нимĕçсен аллинче тăракан аэродромсем çине бомбардировщиксемпе истребительсен çĕнĕ эскадрильисене ярать. Сывлăшра çапăçусем вăйлансах пыраççĕ.

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Тунис территорийĕнче пулнă пĕрремĕш пысăк çапăçура Англипе Америкăн ударнăй отрячĕсем Германин бронетанковăй колоннин виççĕмĕш пайне яхăн пĕтерсе тăкнă. Çав колоннăн, тата ытти икĕ колоннин каялла чакмалла пулнă.

Нимĕçсем хăйсен чи лайăх çĕнĕ танкĕсемпе тата пикировка тăвакан бомбардировщикĕсемпе усă курса çапăçнă, çапăçу Бизертăран 50—60 километртра пулса иртнĕ. Союзниксен ударнăй отрячĕсем тĕрлĕ пунктсенчен Бизертăпа Тунис хулисем патнелле пынă. Союзниксен çухатăвĕсем пысăк мар. Нимĕçсем Бизертăран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр 45—50 километртра тата Тунис районĕнче тĕрекленсе ларнă пулмалла. Ĕнерхи çапăçусенче нимĕçсем пысăк çухатусем тÿснĕ, анчах та вĕсем çапăçăва йышлă резервсем кĕртсе янă, çавăнпа çитес вăхăтра вăйлă çапăçусем пулса иртеççĕ пулмалла.

БЕНГАЗИЕ ЭВАКУАЦИЛЕНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви каланă тăрăх, Германири радио Бенгазие эвакуацилени çинчен пĕлтернĕ.

ДАРЛАН ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Алжиртан пĕлтернĕ тăрăх, адмирал Дарлан Францин Çурçĕр Африкăри верховнăй комиссарĕ пулса тăнă шутпа радио тăрăх «пĕрремĕш заявлени» тунă.

Дарлан гитлерла Германипе фашистла Италие хирĕç пĕр сăмах та каламан. Вăл çапла каланă: верховнăй комиссарăн вырăнне эпĕ Америка влаçĕсемпе килĕшсе тата хама маршал Петэн «хăйĕн шухăшĕсене ирĕклĕн каласа пама пултарнă вăхăтра» панă приказа пурнăçа кĕртес шутпа йышăнтăм, тенĕ.

Дарлан хăйĕн пĕтĕм сăмахĕнче Петэна юрасшăн пулса ăна асла хурса мухтанă.

АМЕРИКА ЖУРНАЛИСЧĔ ДАРЛАН ÇИНЕ МĔНЛЕ ПĂХНИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн обозревателĕ Крок çапла каланă: Дарланпа çыхăнса ĕçлесси вăл Америка çарĕн командованийĕ пуçарнипе пуçланнă; Америка çарĕн командованийĕ Дарланпа усă курма юрать тесе шутланă. Пĕрлешÿллĕ Штатсен государственнăй департаменчĕ Америка çарĕ Дарланпа килĕшÿ тунă çĕре хутшăнман, çак ĕçре вăл çар министерстви çине шанса тăнă.

Фланден Африкăна пыни çинче чарăнса тăрса, Крок çакна кăтартса парать: политика енчен усăллă пуласси не шута илсе, Фланденпа та усă курма пулнă пулĕччĕ, анчах та Эррио Çурçĕр Африкăра правительство туса хурсан тата авантарах пулнă пулĕччĕ.

АНГЛИ ПИЧЕЧĔ ДАРЛАН ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: Дарланпа килĕшÿ тунин хăшпĕр результачĕсем ĕçри çитĕнÿсем пулса тăраççĕ пулин те, çав килĕшÿ вăл Францире пыракан вăрттăн движенишĕн тата кĕрешекен Франци движенийĕ майлă тăракансемшĕн пуриншĕн те сиенлĕ пулса тăрать.

Дарлан вăл,—тесе çырать хаçат, — квислинговец пулса тăрать, унăн кăмăлĕ Англие хирĕç пыни пирки эпир халь пĕртте иккĕленместпĕр. Çакăн пирки пăшăрханасси вăл «вăхăтлăх килĕшĕве» пĕтерсе лартиччен пĕтмĕ.

Америкăри радиокомментатор Эд Морроу хăйĕн «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçатра пичетленĕ заявленинче Дарланпа тунă килĕшÿ пирки çапла ыйтать: «Пусмăрти халăхсен, Дарлана чи пысăк сутăнчăксенчен пĕри тесе шутлакан халăхсен куçĕ умĕнче эпир çапла шанчăксăра тухмăпăр-и? Эпир малашне хăçан та пулсан Норвегие йышăнса илсен ăна квислинговецсене сутăпăр-и?».

ПЕТЭН ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Петэн радиопа сăмах тухса каланă. Çав сăмахра вăл Африкăри çарăн генералĕсемпе офицерĕсене тата салтакĕсене «англо-саксонецсен агрессине» хирĕç тăма чĕннĕ тата «пĕр ют çĕршыв державишĕн ĕçлеме тытăнса» Петэнăн приказĕсене пăхăнми пулнă начальниксен распоряженийĕсене пурнăçа кĕртме отказ пама чĕннĕ. Лавале хăйĕн йывăр задачине пурнăçлама пулăшас тесе, эпĕ унăн влаçне аслăлатма шут тытрăм, тенĕ Петэн. Петэн Франци халăхне Лавале пăхăнса тăма хушнă.

—⊙—

АНГЛИ ВОЙСКИСЕМ БЕНГАЗИ ХУЛИНЕ ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 20-мĕшĕнче ирхине Англи войскисем Бенгази хулине йышăннă. 8-мĕш армин малти чаçĕсем противникпа Аджедабирен инçех мар вырăнта (Эль-Агейлăран 70 мильăра) çапăçма тытăннă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ИСПАНИЕ ОККУПАЦИЛЕМЕ ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк пост» хаçатăн корреспонденчĕ Бернран пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем Испание, чи малтан—Балеар утравĕсене, оккупацилеме хатĕрленеççĕ.

Стендли тухса калани

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат пухнă пухура Пĕрлешÿллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи посолĕ Стендли, вăхăтлăха Пĕрлешÿллĕ Штатсенче пурăнаканскер, сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Юлашки 6 уйăх хушшинче эпĕ вырăс çĕршывĕпе унти халăха тата вăл вăрçă ĕçне пите те пысăк вăй хунине çывăхранах сăнаса пурăнтăм. Вырăссем питĕ чаплă çитĕнÿсем тунин сăлтавĕсем Хĕрлĕ Çар вăйлăн хирĕç тăнинче çеç мар, унăн хастарлăхĕнче, йĕркелĕхĕнче тата каялла чакассинчен ытларах вилме хатĕр пулнинче çеç мар. Совет Союзĕнче кашни арçынпа хĕрарăм тата çамрăк çын хăйсен пурнăçне пĕр шеллемесĕр çапăçаççĕ, ĕçлеççĕ. Тулли пĕрлĕх унта пĕтĕм Совет Союзĕн—правительствăн, çарăн тата халăхăн паллă енĕ пулса тăрать. Пĕрле тăрăшни, хăйсен пурнăçне шеллеменни тата тăван çĕршыва парăнса ĕçлени мана чунтанчĕререн савăнтарчĕ.

Америка халăхĕпе вырăс халăхĕ, — тенĕ малалла Стендли,—пĕр-пĕрне кирек хăçанах та ăнланнă. Агрессие хирĕç пыракан кĕрешÿре пĕрле тунă мероприятисене пула курса-чăтса ирттерни пирĕн халăхсем пĕр-пĕрне ăнланассине тата ытларах ÿстерсе ярĕ.

ПАПЕНА «ТАПĂННИ» ТЕКЕН ĔС ÇИНЧЕН

АНКАРА, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Турцин касациллĕ сучĕ, Папена «тапăнни» текен ĕçпе йышăннă приговора пăрахăçласа, ăна Анкарари уголовнăй суда малтанхи составпах тепĕр хут пăхса тухма янă. Çав судра ĕçе пăхма тытăннă чухне совет гражданĕсем Павловпа Корнилов судăн составне тата прокурорăн помощникне Кемаль Бора отвод панă, вĕсем халь пăрахăçа кăларнă тĕрĕс мар приговора йышăнас умĕн çав суд ĕçсене пăхмалли йĕркесене нумайĕшне пăснине кăтартса панă. Анкарари суд хăйĕн составне отвод панине пăхса тухма Анкара çывăхĕнчи Кескине хулинчи уголовнăй суда панă. Кескинери суд Анкарари судăн составне отвод панипе килĕшмен, вăл Павловпа Корнилов отвод тума кăтартса панă сăлтавсене пăхса тухма унăн хăйĕн прави çуккине кăтартса панă. Кескинери судăн решенине Павловпа Корнилов пăрахăçлама ыйтнă. Паян Анкарари уголовнăй суд Павловпа Корниловăн жалобине пăхса тухма çывăхри Чанкара хулинчи суда пани çинчен пĕлтернĕ. Çавăнпа Анкарари суд Павловпа Корниловăн ĕçне пăхса тухассине ноябрĕн 25-мĕшĕччен хăварнă.

—o—

Пĕлтерÿ

Ноябрĕн 23-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Шупашкар Горкомĕн парткабинечĕн лекцисем вуламалли залĕнче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» хăйсем тĕллĕн вĕренекенсемпе пропагандистсем валли лекци пулать. Лекци теми: «Ленинпа Сталин Германин вăрă-хурахла империализмĕ çинчен».

Лекцие ВКП(б) Обкомĕн лекторĕ Иванов юлташ вулать.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Пирĕн землякçем

Писатель-боец

Пирĕн фронтовиксем хушшинче нумай тĕрлĕ халăхсен ывăлĕсем пур. Пурте вĕсем пĕр ĕмĕтпе пĕтĕçсе тăраççĕ, пĕр шухăшпа çунаççĕ — ылханлă тăшмана пĕтерсе тăкмалла! Çĕнтерÿшĕн, тăван çĕршывăн чапĕшĕн вĕсем паттăрла ĕçсем тăваççĕ, тăшмана хирĕç хăйсен пурнăçне хĕрхенмесĕр кĕрешеççĕ.

Совет халăхĕн ирĕклĕхĕшĕн пыракан çак кĕрешÿре пирĕнтен кашни хăйĕн тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçлĕхне тÿррĕн пурнăçа кĕртме тăрăшать. Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн Хĕрлĕ Çар воинĕ пурне те пама хатĕр. Фронтра кашни хăйĕн пултарулăхĕпе тавçăрулăхне кура хăйĕн вырăнне тупать.

Манăн кунта чăваш халăхĕн ывăлĕ Василий Осипович Алагер çинчен, «Нарспи», «Кахал», «Унăн çулĕ» тата ытти пьесăсен авторĕ çинчен каласа парас килет.

Пирĕн пата фронта вăл çак çулăн пуçламăшĕнче килчĕ. Вăл саперччĕ. Саперăн ĕçĕ çăмăл мар. Темиçе уйăх хушши вăл оборонăллă сооруженисем тунă çĕрте ĕçлерĕ. Командирăн приказĕсене яланах тÿррĕн пурнăçа кĕртсе пычĕ. Противник тăвăллăн персе тăнине пăхмасăрах вăл оборонăн малти хĕрри урлă хăюллăн каçса, минăсем лартать, йĕплĕ пралук карать, танксене чарса лартмалли чăрмавсем тăвать. Тăшман урса кайса хирĕç тăрать пулин те, пирĕн оборона сехетрен сехетех ÿссе пырать. Нимĕçсен снайперĕсем Алагер хыççăн пайтах йĕрленĕ, анчах ăна ниепле те тытайман. Вăл çав-çавах чĕрĕ те сывă юлнă, командованин приказĕсене чăнчăн воинăн тивĕçлĕхĕпе пурнăçа кĕртсе пынă.

Хăш чухне, сывлăш çавăрмалли вăхăт килсе тухсан, вăл хăйĕн тăван литературишĕн тунсăхлать. Унăн çырас кăмăлĕ пысăк. Геройла ĕçсем кунта пирĕн вĕçĕ-хĕррисĕр нумай-çке-ха! Писатель вĕсене пурне те тимлĕ куçпа сăнаса пырать. Вĕсем çинчен халех каласа парас килет. Анчах кунта çырма вăхăт та, майсем те çук. Алагер юлташ фактсене, çынсен ячĕсемпе ĕçĕсене лÿчĕркенсе пĕтнĕ пĕчĕк кĕнеке çине çырса пырать. Улĕм çав лÿчĕркенсе пĕтнĕ кĕнеке отечественнăй вăрçăн аслă самани çинчен пысăк кĕнеке çырма кирлĕ пулĕ.

Часах эпир Алагер юлташа красноармеецсен хаçачĕн редакцине ĕçлеме илтĕмĕр. Унта та вăл хăйĕн ĕçне пĕтĕм чун-чĕрипех парăнчĕ. Вăл яланах малти ретре, боецсемпе, командирсемпе пĕрле, окопра, блиндажра, урăхла каласан, фронтăн чăн-чăн пурнăçĕ вĕресе тăнă çĕрте. Çавăнпа та вăл боецсемпе командирсен кулленхи геройла ĕçне тĕплĕн çутатса пырать, пирĕн çитменлĕхсене çийĕнчех асăрхаса илсе, вĕсене пĕтерме пулăшать. Снарядсемпе минăсем çурăлнă çĕрте, тăхлан çăмăрĕ айĕнче вăл çапăçу хирĕ урлă шуса çÿрет, пурне те хăйĕн куçĕпе курма тăрăшать.

Пирĕн чаçăн геройла ĕçĕсене вăл ĕнтĕ сахал мар çырса кăтартнă.

Чăваш халăхĕн аслă та лăпкă, темĕнле именÿллĕрех, анчах çапăçура хăюлăх кăтартакан ывăлĕ çине пăхатăн та, кăмăл татах та ытларах çĕкленет. Çакăн пек çынсемпе тивĕçлипех мухтанас килет.

Çапăçу хирĕсенчи вут-çулăм лăплансассăн, пирĕн çĕр çинчен тар тĕтĕмĕ сирĕлсен, пирĕн тăван çĕршыв ирсĕр нимĕçсенчен тасалса çитсен, унăн хĕрÿ çапăçусенче пиçĕхнĕ ывăлĕсем вăрçăран таврăнĕç те хăйсен мирлĕ ĕçне тытăнĕç. Халăх хăйĕн паттăр ывăлĕсене чысласа мухтавлĕ,—вĕсем хушшинче чăваш халăхĕн шанчăклă ывăлĕ Василий Осипович Осипов (Алагер) та пулĕ.

Старши политрук А. ПОДОЛЬСКИЙ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

ИЗДАТЕЛЬСТВУ газеты „Чăваш Коммуни" требуются: ответ. работник по бумаге, фоторепортер, зав. складами, рассыльные.

Обращаться: Чебоксары, Дом печати, 3 этаж, комната 18.

Чувашпромсоюз организует при Учебном Комбинате в г. Чебоксарах курсы по подготовке бухгалтеров и счетоводов.

Условия приема на курсы бухгалтеров: образование не ниже 9-10 классов и год счетной работы по двойной системе бухгалтерского учета. Срок обучения семимесячный. На курсы счетоводов—образование не ниже 7-ми летки. Срок обучения 5 месяцев.

Курсанты обеспечиваются стипендией в размере 200 руб. в месяц и, кроме того, получают 50 руб. квартирных.

Начало занятий 1-го декабря 1942 г.

Лица, желающие поступить на курсы, должны получить командировку от ближайшей артели Чувашпромсоюза или непосредственно от Чувашпромсоюза в г. Чебоксарах.

ЧУВАШПРОМСОЮЗ

УПРАВЛЕНИЕ СТРОИТЕЛЬСТВА ГУШОСДОРА НКВД СССР ОБ'ЯВЛЯЕТ НАБОР СЛУШАТЕЛЕЙ НА КУРСЫ ПОДГОТОВКИ ШОФЕРОВ

На курсы шоферов принимаются мужчины и женщины в возрасте не моложе 17 лет, имеющие образование не ниже 4-х классов.

Зачисленным на курсы выплачивается стипендия в размере 200 р. и предоставляется питание.

Иногородние обеспечиваются общежитием.

Срок подачи заявлений—до 15 декабря 1942 г.

Начало занятий—20 декабря.

Срок обучения—полтора месяца,

За всеми справками обращаться ежедневно, кроме выходных дней, по адресу: ул. Калинина, д. № 51, отдел кадров.

Писменные заявления направлять по этому же адресу.

НАРОДНЫЙ КОМИССАРИАТ ФИНАНСОВ ЧУВАШСКОЙ АССР

в связи с проведением в период с 1 декабря 1942 г. по 25 января 1943 г. налогового учета плательщиков и объектов обложения по государственным и местным городским налогам на 1943 год

ОБЪЯВЛЯЕТ:

1. В городах и рабочих поселках управляющие домами и домовладельцы обязаны представить рай(гор)финотделам учетные сведения—карточки налогового учета проживающих в домовладениях граждан (мужчин и женщин) 18 лет и старше (ф. № 26) в сроки, установленные рай(гор)финотделами.

За несвоевременное или неполное представление указанных сведений управляющие домами и домовладельцы подвергаются штрафу до 100 рублей.

В сельских местностях учет плательщиков и объектов обложения по городским налогам проводят райфинотделы по спискам плательщиков, составленным в 1942 г. при проведении сельскохозяйственного налога (ф. № 4-н) с последующей проверкой данных учета на срок 1-го января 1943 года.

2. Лица, занимающиеся кустарными и ремесленными промыслами, а также извозом, которые будут продолжать их в 1943 году, обязаны до 31 декабря 1942 года выбрать в рай(гор)финотделах соответствующие регистрационные удостоверения.

За невыборку регистрационных удостоверений на занятие промыслами кустари, ремесленники и лица, занимающиеся извозным промыслом, подвергаются штрафу до 500 рублей.

3. Граждане, имеющие самостоятельные источники дохода, кроме заработной платы, пенсий и стипендий, обязаны до 15 января 1943 года подать в рай(гор)финотделы по месту обложения декларации о доходах, полученных в истекшем году.

Освобождаются от подачи деклараций граждане, доход которых за истекший год не превысил 600 рублей, а также рабочие, служащие и приравненные к ним по обложению лица, не имеющие других источников дохода, кроме доходов от подсобного сельского хозяйства, облагаемых по нормам доходности.

За неподачу в срок декларации плательщики подвергаются штрафу до 200 рублей.

4. Предприятия, учреждения и организации обязаны сообщить рай(гор)финотделам не позднее 15 декабря необходимые для обложения налогами сведения за предыдущий месяц о выплаченных суммах разным лицам за поставленные изделия, сельскохозяйственные продукты, произведенные работы, оказанные услуги и т. п. (ф. № 5).

Предприятия, учреждения и организации, не представившие указанных сведений за предыдущие месяцы, обязаны представить эти сведения за время с 1 января до 1 декабря 1942 года, а в следующие месяца—не позднее 15-го числа каждого месяца за предыдущий месяц.

5. Предприятия и правления промыслово-кооперативных артелей не позднее 10 января 1943 года обязаны представить рай(гор)финотделам сведения (ф. № 6) за истекший год о заработках рабочих, служащих, членов артелей, работающих для предприятий и артелей у себя на дому. Бланки сведений получить в рай(гор)финотделах.

За несвоевременное или неполное представление сведений, указанных в п. п. 4—5 настоящего об'явления, лица, ответственные за представление сведений, подвергаются штрафу до 100 рублей.

Показания в декларациях и представление заведомо неверных сведений влекут за собой ответственность в уголовном порядке.

Наркомфин Чувашской АССР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн 3—99. ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1000 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. За каз № 2 Ф 6. 58 84 п.